**ЮБИЛЕЙ**

# КОМПОЗИТОР ПУЛМАХ ÇУРАЛНĂ ВĂЛ

АНИСИМ Асламас /1924-2000/ иртнĕ ĕмĕрти вăрçă хыççăнхи çулсенче чапа тухнă композитор.

Унпа пĕрле пурăннă, пĕрле ĕçленĕ чăваш музыканчĕсен ăрăвĕнчен эпĕ кăна юлтăм пулас. Эпир тантăшсем пулнă тесен те йăнăш мар: манран çур çул кăна аслăрахчĕ. Шупашкарти музыка училищине те пĕрле пырса кĕтĕмĕр: Анисима та, мана та Степан Максимович Максимов хăй тĕрĕслерĕ. Анчах 1937 çул вĕçĕнче пирĕн юратнă директора «халăх тăшманĕ» тесе тытса кайрĕç. Ун чух Анисимпа эпĕ юлашки пухура юнашар ларнăччĕ. Кайран та эпир вăрçă пуçланиччен пĕрпĕринчен уйрăлман, общежитире те пĕр пӳлĕмрех пурăнаттăмăр.

Анисим Васильевич Васильев /çак хушаматпа пурăннă вăл вăрçăччен/ Етĕрне районĕнчи Вăрманкас Асламасра утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Каярахпа, вăрçă хыççăн, хăйĕн хушаматне хăех тăван ял ячĕпе çыхăнтарчĕ.

Училищĕре иккĕмĕш курсра вĕреннĕ чухнех Анисим юрăсемпе романссем кĕвĕлеме пуçлать /ун чух хор дирижерĕсен класĕнче вĕренетчĕ/. Çапла, Ф.Тютчев поэзийĕпе хавхаланса, «Весенняя гроза» тата «Весенние воды» романссем çырать, С.Алымов сăвви тăрăх «Донцы-молодцы» юрă кĕвĕлет.

Çамрăк музыкант рояльпе тĕрлĕ импровизацисем калама ăстаччĕ. Çавăн пек самантсенче çуралчĕ те унăн çав тери илемлĕ кĕвви. Сăвви камăн пулнине халĕ ас тумастăп, анчах пĕрремĕш куплетри сăмахсем яланлăха асра юлчĕç:

Юлан утлă партизан
Пынă урампа иртсе,
Пăхса юлнă кантăкран
Сар хĕр куççульпе йĕрсе...

Те «Сарă хĕр», те «Партизан вилĕмĕ» ятлăччĕ сăвви. Сăвăри сăнарсемпе килĕшсе кĕвви те героикăлла романтика туйăмĕпе вĕриленнĕ. Вăрçăччен ку юрă ниçта та пичетленмен, ăна кам та пулин юрланине те ас тумастăп. Композиторăн чи илемлĕ юрри пулса юлчĕ вăл. Ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлчĕ. Автор ун чухне вун пиллĕкре кăна пулнă вĕт. Тепĕр 24 çултан тин илтрĕмĕр тепĕр хут çак кĕвве: композитор ăна «Шуршăл тăхлачи» музыкăлла комеди партитурине кĕртнĕ /«Надя юрри», çĕнĕ сăввине В.Давыдов-Анатри çырса панă/.

А.Асламас талантлă музыкант пулни вăрçă умĕнхи çулсенчех палăратчĕ. Педагогсене те, пĕрле вĕреннĕ студентсене те вăл хăйĕн музыкăри ăсталăхĕпе сахал мар тĕлĕнтеретчĕ. Акă пĕр тĕслĕх.

...Ку вăл 1940 çулхи çĕртме уйăхĕнче пулнăччĕ. Шупашкара Ленинградра ĕçлесе пурăннă Владимир Иванишин /1908-1941/ композитор килчĕ. Хăйĕн пултарулăхне чăваш музыка культурипе çыхăнтарнăскер, унччен вăл чăвашсен пĕрремĕш симфонийĕн /1936/ авторĕ пулнă. Хальхинче вара Владимир Георгиевич тин çеç пĕтернĕ «Нарспи» опера партитурине илсе килчĕ.

Композитор хăйĕн çĕнĕ произведенине пирвайхи хут музыка училищин залĕнче рояльпе каласа кăтартрĕ. Оперăна çавăн чух Асламас та итлерĕ. Итленĕ те – чылай сыпăка асра тытса юлнă.

Опера авторĕсене В.Иванишин композиторпа П.Хусанкай либреттиста, симфони оркестрне ертсе пынă И.Альтерман дирижера, залран тухса аялти хута аннă чух, чăннипех тĕлĕнтермĕш япала кĕтнĕ: училищĕри пĕр класран тин çеç сӳтсе явнă опера увертюри янăрама пуçланă. Ăна иккĕмĕш курс студенчĕ Анисим Васильев /Асламас/ нотăсемсĕрех рояльпе каланă... Эпир пĕрле вĕреннĕ Аполлон Галкинпа çак саманта ялан аса илеттĕмĕр.

Çавăн чух çуралчĕ те Анисимăн опера çырас ĕмĕчĕ. И.Салампекĕн «Велиме» драма пичетленсе тухсанах /1940/ вăл мана либретто çырма сĕнчĕ. Çырма та пуçланăччĕ эпĕ. Паллах, ку вăл ун чух пирĕншĕн «ача ваййи» çеç пулнă. Вăрçă хыççăн Киеври тата Мускаври консерваторисенчен вĕренсе тухсан Анисим опера жанрĕнче ĕçлекен чи паллă композиторсенчен пĕри пулса тăнă. Вăл кĕвĕленĕ «Айтар», «Вĕçленмен кĕвĕ» /П.Осипов либреттисемпе/, «Çеçпĕл» /К.Поляковпа Г.Фере либреттипе/ сцена çинче лартса пачĕç. Унăн «Вера Сарьяловăпа» «Салампи» оперăсем те, «Хĕвеллĕ кунсем» тата «Шуршăл тăхлачи» музыка комедийĕсем те пур. Опера çырас ĕçре уншăн В.Иванишин чи пысăк авторитет пулнăччĕ. Çапла вăл пирĕн умра ялан палăратчĕ.

Тепĕр авторитет – çамрăклах вилнĕ композитор тата пианист Геннадий Воробьев /1918-1939/. Вăл Мускав консерваторийĕнче вĕреннĕ чух Шупашкара ашшĕ патне часчасах килетчĕ, училищĕре е академи театрĕнче ирттернĕ концертсене хутшăнатчĕ. Геннадий хăйĕн хайлавĕсене фортепьянопа ăста калани ĕмĕрлĕхех асра юлчĕ. Асламас та çавăн пек композитор пулма ĕмĕтленнĕ. Унăн хваттерĕн ĕç пӳлĕмĕнче Г.Воробьевăн пысăк портречĕ çакăнса тăнă.

Фортепьяно валли те сахал мар çырчĕ вăл: икĕ концерт, соната, вариацисем, «Тăван ялта» ярăмри асра юлакан пьесăсем тата автора чăннипех чапа кăларнă «Чăваш рапсодийĕ» /оркестрпа пĕрле каламалли/. Вĕсене хăш-пĕрне концертсенче Анисим хăй калатчĕ. Композитор-пианистсем Г.Воробьевпа А.Асламассăр пуçне пирĕн урăх пулман.



Стихван Шавли сăвви аса килет:
Вылянчăк аллусем-аристократăн,
Шутла сана хресчен ачи тесе.
Орфей те илтнĕччĕ хĕпĕртесе.
Вĕçсе каяс пек çĕкленсе
ларатăн.
...Пушаннă урампа киле уттартăм:
Петраркăсем, Листсем,
Чайковскисем
Халь çуралма пуçларĕç
чăвашсен.
Килсе тапраннă шухăша эп
путрăм.

Ман шутпа, А.Асламаса Г.Воробьевпа В.Иванишин симфонийĕсем те хавхалантарнă. Оркестр валли вăл сахал мар произведени çырнă, çав шутра А.Г.Николаева халалланă «Космос симфонийĕ» /1975 ç./.

Ăçта кăна янăрамарĕ пуль «Асаттесен кĕввисем» поэма, чăвашсен паллă музыкантне А.С.Любимова халалланăскер. Унăн пластинки Японире те тухрĕ /солисчĕ А.Любимов/.

Чăвашра çуралса ӳснĕ А.Асламас композитор хăйĕн пултарулăхне пĕтĕмпех Чăваш Ен сăнарĕсемпе, тăван халăхăн музыка фольклорĕпе çыхăнтарчĕ. Халăх юррисене те, пирĕн çыравçăсен хайлавĕсене те чунран юрататчĕ вăл. Çакна К.В.Иванов поэзийĕнчен çуралнă «Поэта асăнса» юрăпа поэма симфони те лайăх кăтартса парать.

Мĕн чухлĕ юрă çырса хăварчĕ вăл тăван халăх валли, вĕсем авторăн 11 пуххинче пичетленчĕç. Ĕмĕрлĕхе юлчĕç «Савăнăç юрри», «Сĕрме купăс», «Ас тăватăп», «Анлă Атăл хĕрринче», «Тăван хула», «Тупата», «Сĕм-сĕм вăрман» тата ытти юрăсем. Вĕсене Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Тăван çĕршыв вăрçинче Брянскран Берлина çитиччен утса тухнă Анисим Васильевич Асламас çырнă. Тăван халăхшăн ĕçленĕ композитора нихăçан та манмĕç.

**Юрий ИЛЮХИН,**
**Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**